**«Чăваш чĕлхи. Республикăн пĕрлехи экзаменĕ» кĕнеке тухрĕ**




Çак кунсенче Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ **«Чăваш чĕлхи. Республикăн пĕрлехиэ кзаменĕ»** вĕренӳпе меслетлĕх кĕнеки кăларчĕ. Кĕнеке авторĕ – А.С. Егорова, этнокультура вĕренĕвĕн кафедрин доценчĕ.

Кĕнекере 9-мĕш класс пĕтерекенсене чăваш чĕлхипе республикăн пĕрлехи экзамене хатĕрлеме тĕрлĕ материал пур: изложенипе сочинении çырма, тест ыйтăвĕсене хуравлама вĕрентмелли кăтартусем, малтан пулнă экзаменсен тĕрĕслев материалĕ, экзамена хатĕрленмелли тĕслĕхсем, ăслав сочиненийĕн тĕслĕхĕсем, хаклав критерийĕсем. Таблица формипе хуравсем кĕртнĕ, хатĕрленмелли литература сĕннĕ.

Кĕнекен электрон вариантне «**Республикăн пĕрлехи экзаменĕ (Единый республиканский экзамен)» баннерта** тата **«Наци вĕренĕвĕ (Национальное образование)» баннерăн «**Институт кăларнă кĕнекесем» пайĕнче вырнаçтарнă.

Кĕнекепе ачасем экзамена хăйсем тĕллĕн те хатĕрленме пултараççĕ. Пособи çумне панă изложении тексчĕсен аудиофайлĕсене итлесе вара вĕрентекенсĕрех изложении çырма хăнăхаяççĕ.

**Хаклă вĕренекенсем! Каникул вăхăтĕнче кĕнекене уçласа илĕр, кĕнекере панă ĕçсен варианчĕсене кашни кун е кун сиктерсе пĕрер тума тăрăшăр. Сывлăхпа çӳрĕр!**